## **Пирĕн телей**

Пĕррехинче аннерен,
Те халиччен илтменрен:
«Телей тени мĕн тени?» –
Тесе ыйтрĕ Сăпани.

Анне ăна йĕркерен,
Мĕн пур чунтан, чĕререн,
Çурăмĕнчен лăпкаса,
ăнлантарчĕ каласа:

«Эсĕ маттур çитĕннĕ,
Ача садне çӳрени,
Унта вăйă выляни –
Телей çавă, Сăпани.

Хапрăк-савăт ĕçлени,
Хирте тыр-пул çитĕнни,
Эпир лайăх пурăнни –
Телей çавă, Сăпани.

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхни,
Шăнкăрч юрă шăратни,
Çĕршыв ӳсни, вăйланни –
Телей çавă, Сăпани.

1950

*Давыдов-Анатри, В. Пирĕн телей : [сăвă] / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 158.*